25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 24 ШАМАТКУН 249(6184) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Октябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 автомашинине тата горючи тултарнă 3 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсен атакисене сирсе тăнă. Пĕр завод районĕнче нимĕçсем кункаçа пирĕн позицисене атакăланă. Çав çапăçусенче темиçе хутчен те штык вĕççĕн тытăçса кĕрешме тивнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Сталинградран кăнтăралларахра Н-ски соединени нимĕçсен пехотине пĕр рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 5 оруди, 20 миномет тата япаласен 2 складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçăн боецĕсем сасартăк пырса çапса противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та хаяр çапăçу хыççăн нимĕçсен окопĕсен икĕ линине йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕннисем 3 оруди, 5 пулемет, 36 автомат, винтовкăсемпе боеприпассем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр высота районĕнче çапăçнă. Противник пирĕн подразделенисене атакăланă, вăл пирĕн боецсем виçĕм кун йышăнса илнĕ тĕреклетнĕ пунктсене каялла туртса илесшĕн пулнă. Гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çав участокра икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен тата румынсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити вĕлернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем оборонăра тăрса çапăçнă. Противникăн пĕр полка çити пехотипе 60 танкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Кункаçа нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 8 оруди пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр участокра кăна гитлеровецсем пирĕн оборонăн малти хĕррине савăлланса кĕме пултарнă. Пирĕн боецсем противникăн çав ушкăнне пĕтересшĕн çапăçаççĕ. Красноармеец Григорьев юлташ нимĕçсен пĕр танкне противотанковăй пăшалпа персе çĕмĕрнĕ, противникăн тепĕр танкне çунакан шĕвек тултарнă бутылка ывăтса ярса вут тивертнĕ. Снайпер Семкин юлташ 11 гитлеровеца вĕлернĕ. Летчик старши сержант Антонов юлташ нимĕçсен истребительне хăваласа пырса çĕр çумне хĕстерсе лартнă, тăшманăн самолечĕ çĕмĕрĕлсе кайнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе тăнă. Гитлеровецсем пĕр высотана йышăнма хăтланнă, анчах вĕсене каялла сирсе янă, вĕсен 150 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тепĕр участокра тинĕс пехотин Н-ски чаçĕ Гордеев юлташ командир пулса ертсе пынипе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 12 дзот тата боеприпассем турттарса пыракан 30 лава пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура сержант Трупов юлташ румынсен 17 салтакне вĕлернĕ, краснофлотец Молчанов юлташ тăшманăн 12 салтакне вĕлернĕ. Пирĕн зенитнăй артиллери хамăр оборонăн малти линийĕ умĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Воронежран кăнтăралларахра противник Н-ски чаçăн оборона рубежĕсем çине наступлени тума хатĕрленнĕ. Çавăн çинчен пирĕн разведчиксем командованиене вăхăтра пĕлтернĕ. Артиллеристсем тата гвардеец-минометчиксем пеннипе наступлени тума хăтланнă противникăн пĕр полка çити пехотине сапаласа янă. Нимĕçсен пехотине икĕ ротăран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ, персе тăракан точкисене пусарса лартнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Пирĕн снайперсем кункаçиччен 77 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Минск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Ворошилов юлташ ячĕпе тăракан отрячĕ юлашки вăхăтра питех те кирлĕ шоссе магистралĕ çинче 17 кĕпере çунтарса е сирпĕнтерсе янă. Тата унсăр пуçне партизансем противникăн çарсемпе техника турттарса пыракан тăватă поездне крушени тунă, вĕсенчен пĕрне, фронта артиллери турттарса пыраканскерне, ӳпĕнтерсе янă. Вара çав чугунçул çинче темиçе талăк хушши поездсем çӳреме пултарайман. Карательнăй отрядпа çапăçса, партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 79 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 51 винтовка тата темиçе пулемет тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ростов облаçĕнчи оккупациленĕ районсенче пурăнакан мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантараççĕ. Ореховка ялĕнче гитлеровецсем 9 казака вĕсем тĕнчери пĕрремĕш вăрçăн участникĕсем пулнă тесе персе пăрахнă. Алексеевка ялĕнче гитлерла палачсем 14 çултан пуçласа 70 çула çитиччен арçынсене пурне те арестленĕ те кашни виççĕмĕшне персе пăрахнă. Вĕсем хушшинче 70 çулхи старик пенсионер Петр Тимофеевич Рошин, 52 çулхи колхоз хуралçи Никифор Федорович Ивасюк, 48 çулхи колхозник Николай Иванович Рублев, унăн 14 çулхи ачи Василий тата ыттисем те нумай.

* * *

Голланди патриочĕсем нимĕçсене çар грузĕсем турттарма памаççĕ. Грифански заливра каçхине горючи турттарса каякан суднăна персе вут тивертнĕ. Рейн шывĕ çинче Анарсемран инçех мар вырăнта патриотсем Германие резина турттарса каякан парохода путарнă.

Октябрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн чаçсем противникпа вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсен пехоти танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăланă. Минометпа тата пулеметпа персе, противникăн пехотине танксенчен уйăрса илнĕ те, вăл вара пысăк çухатусем тӳссе, каялла чакнă. Нимĕçсен 2 танкĕ кăна пĕр заводăн кăнтăр-хĕвеланăç пайне кĕрсе кайма пултарнă, анчах та вĕсене унта пирĕн артиллеристсем персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть çапăçу хыççăн тактика енчен паха пĕр высотана йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем пирĕн подразделенин позицийĕсене атакăланă, анчах та хирĕç пырса çапса вĕсене хăйсен малтанхи рубежĕсем çине хăваласа янă. Нимĕç салтакĕсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтернĕ, икĕ противотанковăй оруди, 2 радиостанци тата боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕнĕ группине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 яхăн вилли выртса юлнă. Çав районра лару-тăру ĕлĕкхи пекех пулса тăнă. Гитлеровецсен ун хыççăн тунă атакисене те пысăк çухатусем тӳстерсе сире-сире янă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче икĕ енĕ те артиллерипе персе тăнă. Коробко юлташ командир пулса тăракан подразделенин артиллеристчĕсем 12 огневой точкăна пусарса лартнă, наблюдательнăй пункта тата противникăн темиçе дзотне пĕтерсе тăкнă. Н-ски подразделенин разведчикĕсем противникăн тылне кĕрсе кайса 40 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен нефтебазине тапăннă. Партизансем çав базăн хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те 80 тонна бензина вут тĕртсе çунтарнă тата 5 ручной пулемет, 2.500 патрон тытса илнĕ. Могилев облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ октябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 8 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав вагонсенчен пĕринче нимĕç генералĕ тата унпа пĕрле пыракан офицерсем пулнă. Вĕсем пурте вилнĕ.

* * *

Карелпа финн партизанĕсен ушкăнĕ противникăн войскăсем турттарса пыракан поездне крушени тунă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çитти пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Курск облаçĕнчи Авдеево ялне çĕрпе танлаштарса лартнă. Колхозниксен 69 çуртне, шкула, колхоз клубне тата хуçалăх хуралтисене пурне те пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем Иван Степанович Трубников колхознике тата унăн икĕ çамрăк ачине персе вĕлернĕ. Анна Васильевна Аристова колхозницăна фашистла ирсĕрсем унăн ывăлĕн виçĕ çулхи хĕрĕпе Зинăпа пĕрле чĕрĕллех çунтарса янă. Гитлерла ирсĕрсем çав ялта мĕнпурĕ мирлĕ пурăнакан 47 çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ.

* * *

Югослави партизанĕсем нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн партизансем Ключ тата Морконичград хулисене виççĕмĕш хут тытса илнĕ. Оккупантсем пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă. Партизансен тепĕр отрячĕ нефть тултарнă 20 цистернăллă поезда вут тĕртсе çунтарнă. Çав операцирен тавăрăннă чухне патриотсем кĕтмен çĕртен итальянецсен моторизованнăй отрядне тĕл пулнă. Пуçланса кайнă çапăçура итальянецсен 120 салтакĕпе 7 офицерне вĕлернĕ. Партизансем 8 пулемет, 78 винтовка, 10 пин патрон тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Укерчĕк çинче: Н-ски подразделени атакăна каять. Малти планра — оборона линийĕ.
ГРИБОВСКИЙ фото ӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Тăваттăмĕш квартал планне тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Яманакри çĕвĕçсен Ворошилов ячĕпе тăракан артелĕ ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене уйăхран-уйăха ытларах туса кăларать. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, артель членĕсем виççĕмĕш кварталти плана 180% тултарчĕç. Артельри рабочисемпе работницăсем ку уйăхра та хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлеççĕ. Октябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне вĕсем уйăхри плана 170 процент, тăваттăмĕш кварталти плана 100 процент тултарчĕç. Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене планран ытлашши туса кăларнипе пĕрлех, артель васкавлă заказсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Сăмахран, иртнĕ уйăхри васкавлă заказсене икĕ хута яхăн иртерсе пурнăçа кĕртнĕ.

Уяв умĕнхи кунсенче артель членĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерсе, ĕç пахалăхне лайăхлатса пыраççĕ. Артельре чылайранпа ĕçлекен Ф. Григорьева кулленхи нормăна 200 процент тултарать, лайăх пахалăхлă таварсем туса кăларать. Çавăн пекех Т. Прохорова юлташ та нормăна 180 процент тултарать. Артельре нормăна тултарайман рабочисемпе работницăсем çук.

* * *

Алманчă ялсовечĕ виççĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ытлашшипех тултарнă, халĕ вăл тăваттăмĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешет. Ялсоветĕнче ялхуçалăх налогне, вăрçă вăхăтĕнчи налога, подоходнăй налога тата культсбор укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

Фронта пур енĕпе те пулăшассишĕн тăрăшса, чылай колхозниксем государство умĕнчи хăйсен укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлеççĕ. 72 çулхи старик Иван Кузьмин кăçалхи налогсене пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Çавăн пекех Н. Егоров, Л. Карпов, С. Капитонов юлташсем те государство умĕнче парăмлă мар.

С. ШАДИН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комиссин складне кашни кунах тиевлĕ лавсем килсе тăраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем тăван фронтовиксем валли ырă кăмăлпа çыхса хатĕрленĕ алшиш-чăлхасем, çăматăсем тата ытти ăшă тумтирсем пырса параççĕ. Ку таранччен районри склада 921 тир, 686,5 килограмм çăм, 77 çăм алшиш, 37 чăлха-носкисем, 68 çĕлĕк, 39 ваткăллă шараварсемпе фуфайкăсем, 51 кĕпе, 42 кальсон, 164 алшăлли, 126 метр пир тата темиçе мăшăр çăматă, вуншар простынясемпе çытар пичĕсем, одеялăсем, кĕрĕк пиншаксем пырса панă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ колхозсенче ăнăçлăн туса пыраççĕ. Тенири «1-ое Мая» колхоз членĕсем паянхи кун тĕлне 28 тир, 18 килограмм çăм, 6 алшиш, 4 кĕпе, 9 алшăлли пухса панă. Унти кашни колхозникпе колхозница боецсем валли ăшă япаласем пама тăрăшать. Колхозница Е. Петрова пĕр тир тата тепĕр мăшăр алшиш, П. Степанова, Е. Ермишина, Я. Смолов колхозниксем пĕрер тир тата çуршар килограмм çăм пачĕç.

Янкурасри «Звезда» колхоз членĕсем те 14 тир, 10 килограмм çăм, 9 алшăлли, 3 мăшăр тăла тата простынясем, минтер пичĕсем, алшишсем чылай пухнă.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе Крымзарайкăри «Коммунар», Кивĕ Матьăкри «Ударник», Тури Панклири «Зерно» колхозсенчи комиссисем те начар мар ĕçлеççĕ. Юлашки эрне хушшинче кăна вĕсем вуншар килограмм çăм, тирсем, алшишсем, носкисем, çăматăсем чылай пухнă.

— Эпир хамăрăн воинсемшĕн пурне те тума хатĕр,—теççĕ «Ударник» колхоз членĕсем. Вĕсем çак кунсенче 16 тир, 15 килограмм çăм, алшăллисемпе носкисем, пир тăласем, пĕр фуфайка пухса пачĕç

Уйрăм колхозсенче ăшă тумтирсем пухас ĕçе çаплипех япăх туса пыраççĕ-ха. Алчукассинчи «Ударник», Анаткасри Ворошилов ячĕпе тăракан, Анат Елăшри «Трактор», Татмăш ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче паянхи кунччченех ăшă тумтирсем пухма тытăнман.

Тăван боецсем валли ăшă тумтирсем пухасси хисеплĕ ĕç. Ку ĕçе пурин те активлăн хутшăнмалла

Х. ЛИСИН.

Укерчĕк çинче: Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ стрелок-радист старшина Тарас Павлович Павлов юлташ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Павлов юлташа Правительство Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Хăй вăл Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче çуралса ӳснĕ.

Землянксен çырăвĕсем

Эпир малалла каятпăр

Совет Союзĕн кăнтăрти тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи районĕсене паттăррăн хӳтĕлекен, совет çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен геройсене активлăн пулăшас движени отечественнăй вăрçăн ытти фрончĕсенчи воинсем хушшинче анлăн сарăлса пырать. Кăнтăрти тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи воинсене пулăшас тени вăл нимĕç оккупанчĕсене нимĕн шеллемесĕр вĕлерсе пĕтерсе, вăхăтлăха фашистла пусмăра лекнĕ ялсенчи, хуласенчи совет ĕççыннисене ирĕке кăларса, тăван çĕршыв умĕнче мухтавлă ĕç тумаллине пĕлтерет.

Пирĕн фронтăн оперативнăй сводкисем юлашки вăхăтра кашни кунах Хĕрлĕ Çар войскисем çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен пĕлтереççĕ.

Çапла эпир кашни кунах тăван çĕре фашистла оккупантсенчен туртса илетпĕр. Тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене пирĕнтен пытарса ĕлкĕреймест. Анчах та ку пирĕн воинсемшĕн сахал пек курăнать, нимĕç салтакĕсен виллисем сахал, вĕсене татах та ытларах вĕлермелле.

Эпир карттă çине пăхатпăр. Пĕр кун хушшинче пулнă çапăçура çавăн чухлĕ яла ирĕке кăларнă. Анчах та карттăсене вăрçăччен туса хатĕрленĕ. Унта колхозсен çеçенхирĕсем хушшинче пысăк поселоксем, шкулсем, клубсем пуррине палăртнă. Шутласа çырнă: çав ятлă ял, унта çавăн чухлĕ хуçалăх. Çаксене пурне пĕрле илнине «яллă вырăн» теççĕ. Халĕ ялта колхозниксен килĕсем çук. Ялсем çук. Чечекленекен вырăнсем çук. Унта икĕ уралла нимĕç тискер кайăкĕсем пулнă.

Пĕр çĕрте: ял, унта шкул, больница, ветпункт пуррине палăртнă. Типсе хăрса пĕтнĕ хурăн йывăç тăррисем, вĕсем текех нихăçан та ӳсес çук. Çав йывăçсем тавра кирпĕч ванчăкĕсен куписем, çуннă пĕрене куписем.

Кунта шкул пулнă. Ăçта халĕ çав шкул? Унăн йĕрри юлнă. Пылчăк ăшĕнче, чӳрече умĕнчи йĕплĕ пралук хушшинче глобус йăваланса выртать,—ăна нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен юнлă аттисем таптаса çĕмĕрнĕ.

Акă, нумаях пулмасть пирĕн позици пулнă вырăн. Траншея. Пĕр-икĕ кун малтан унта нимĕç ларнă. Высота патнелле кайнă çĕрте тырă кашласа ларать. Пирĕн кашни окопран çав высота патнелле пĕр çын утмалăх сукмак тунă. Çак окопсенчен тухса пирĕн саперсем противникăн йĕплĕ пралукĕсене касма, пехотинецсене çул уçса пама кайнă.

Эпир çак çулпа каятпăр. Сасартăк çак сукмак сарăлать.—Унта тарăн шăтăк. Юлташăмсем, çĕлĕкĕрсене хывăр! Кунта пирĕн пехотинецсене çул уçса пама пынă герой-сапер çури айĕнче мина çурăлса кайнă. Анчах сукмак пĕтмест, ăна тепĕр герой-сапер малалла тăснă. Çак сапер-герой пралуксем патне çитнĕ, вĕсене хачăпа каснă.

Утăм хыççăн утăм çак сукмакпа малалла каятпăр. Çав герой-сапер окоп чавса выртнă, минăсене кăларса аяккалла хунă, çав минăсем халĕ те сукмакăн икĕ енче выртаççĕ. Герой-сапер пралукăн тепĕр линине каснă. Вăл нимĕç позицийĕсем патне çитесси 100 метр юлсан чарăннă. Унăн йĕрĕ тăрăх пыракан пехота атакăна тухнă. «Çĕнтерӳ çулĕ» тесе асăнсан, эпир яланах çав ыраш хирĕ урлă пĕр паллă мар сапер хунă йĕре аса илетпĕр,—теççĕ малалла наступлени туса пыракан воинсем. Çак урлă-пирлĕ шăтăк чавса çӳремелли çулсем тунă высота çинче ĕлĕк ял пулнă. Нимĕçсем ялти мĕнпур килсене çунтарса янă. Малтан нимĕçсем çуртсем çинчи хĕçтимĕрсене пурне те сӳсе илнĕ те Германие илсе кайнă. Плутсене, молотилкăсене, жнейкăсене, комбайнсене пурне те Германие илсе кайнă. Ухватсене, турчăкасене те манса хăварман!

Çак высота çинче помещик хуçалăхне организацилеме май килмен пулсан, нимĕçсем хресченсене урăх майпа чура тунă. Хресченсен мăйне бирка (номер) çакнă. Çав биркăсăр урама тухатăн—персе пăрахаççĕ. Клеймит тунă йытă пек!

Нимĕç салтакĕсене тăрантарма пĕчĕк ачасене высота çине апат илтерсе пыртарнă. Высота çине пирĕн снарядсем час-часах ӳкнĕ. Вилсе пĕтчĕр, тенĕ çак икĕ уралла тискер кайăксем пирĕн çамрăк ăрăва! Ваня Докукин красноармеецăн гимнастеркине тăхăннă пулнă. Вăл çамрăк ача. Çавах та нимĕçсем ăна «партизан» тенĕ. Персе вĕлернĕ.

Нимĕçсем çак вырăнта пĕр çулталăка яхăн хуçа пулса пурăннă. Кунтан тухса кайма шутламан вĕсем! Вĕсем 12 накат сарса блиндажсем тунă, хресченсен пӳрт урай хăмисене илсе урай сарнă, блиндажсене кроватьсем, комодсем илсе пынă. Вĕсене кунта нимĕнле вăй та çĕнтерес çук тесе шутланă вĕсем. Пирĕн фронтри воинсем нимĕçсене çак ялтан, çав высота çинчен хăваласа ячĕç. Пирĕн фронтра халĕ нимĕçсене комод, кровать çинчен шухăшлама вăхăт çук. Вĕсене шаккаççĕ.

Р. ШАШКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Танксен „Колхозник Чувашии" колоннине тума

ТĂВАЙ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухмашкăн чĕнсе каланине районри колхозсенче пысăк çĕкленӳпе сӳтсе яваççĕ. Енер Иваново ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тăвас пуçарăва ырласа, колхозниксем пуху хыççăнах 2.500 тенкĕ укçа пухрĕç. Колхоз председателĕ Мукин юлташ çак ĕç валли 500 тенкĕ пачĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе вăйлатмалла

КУСЛАВККА. ВКП(б) Обкомĕ кăтартса панă тăрăх, пирĕн уйхирсенче çĕртме сухине октябрь уйăхĕ пĕтнĕ тĕле вĕçлемелле. Октябрь уйăхĕ пĕтсе пырать пулин те, районри хăшпĕр колхозсем кая юлса пынă пирки, район паянхи куна кĕрхи çĕртме тумалли плана 50 процента яхăн çеç тултарнă. Паллах, районра çĕртме сухи тумалли малтан панă плана ирттерсе тултарнисем те пур. Çитес çулхи вăйлă тырпул никĕсне халĕ хывса хăварма кирлине Жданов ячĕпе тăракан, «Правда», «Путь к социализму», «Красный Курган» колхозсем аван ăнланнă. Вĕсем малтан панă плана пурте пекех тултарнă.

Кармăшри «Карл Маркс» колхоз иртнĕ çулсенче малта пыракан колхозсен ретне тăма тăрăшатчĕ. Анчах вăл халĕ вăрçă вăхăчĕ халиччехинчен темиçе хут хĕрӳллĕрех ĕçлеме ыйтнă чух пур ĕçсенче те кая юлса пырать. Кармăш колхозĕн кĕрхи çĕртме сухине 420 гектар çинче туса хăвармалла. Анчах вăл октябрĕн 22-мĕш тĕлне 33 гектар çеç сухаланă, малтан панă плана та 10 процента яхăн çеç тултарнă. Çавăн пекех Катĕркасси колхозĕ те халиччен малта пыратчĕ. Халĕ вăл çĕр гектар кĕрхи çĕртме тăвас вырăнне 38 гектар çеç сухаланă. Ытти колхозсем вара вăрçă вăхăчĕ ыйтнине те, яланхи тивĕçлĕх ыйтнине те пăхăнмаççĕ. Кусен шутне Паймитри «Ю. Каганович», «Канаш», Эльменкассинчи «Кзыл куч», Куславкка колхозĕсем кĕреççĕ.

Аманикри «Динамо» колхоз та иртнĕ çулсенче районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланатчĕ. Вăл Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулма та тивĕçлĕ пулнă. Халĕ вара, çĕршывпа фронт колхозсенчен ытларах тырпул, аш-какай ыйтнă чухне, «Динамо» колхоз çав ыйтуран пăрăннă пекех, кая юлса пыракан колхозсем патне туртăнма пуçларĕ. Çĕртме тумалли малтан панă плана 70 процент ытларах çеç тултарни те çавăн çинчен калать.

Чылай колхоз председателĕсем хăйсем кая юлнин сăлтавне «ĕç вăйĕ çитмест, туртăм вăйĕ те çителĕксĕр» тесе ăнлантарма пăхаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Ĕç вăйĕ, туртăм вăйĕ кĕрхи çĕртме планне ирттерсе тултарнă колхозсенче те çак колхозсенчи пекех. Малта пыракан колхозсенче кирек мĕнле ĕçе те йĕркелеме пĕлни çеç вĕсеннинчен урăхларах.

Юлнă вăхăтпа кирлĕ пек усă курмалла, МТС тракторпа килсе пулăшасса кĕтсе тăмалла мар, малта пыракан колхозсен примерĕпе усă курмалла та кĕрхи çĕртме планне кăтартнă срокра пурнăçламалла.

С. ГРИГОРЬЕВ,
Куславкка райçĕрĕç отделĕн заведующийĕ.

СИЛОС ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА ÇАК КУНСЕНЧЕХ ТУЛТАРМАЛЛА

— Силос вăл — сĕтеклĕ апат! Силос паха пултăр тесен, ăна вăхăтра хывса хăварас пулать, — тет Йĕпреç районĕнчи «Молния» колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ И. Терентьева юлташ.

Питех те тĕрĕс калать Терентьева юлташ. Вĕсем силоса кашни çул вăхăтра хывса хăвараççĕ. Кăçал план тăрăх 160 тонна силос хывмалла пулнă, вĕсем ăна июнь уйăхĕнче хывса хăварнă.

— Силосăн усси пысăк, ăна выльăхсем юратса çиеççĕ. Уйрăмах вăл сăвакан ĕнесемшĕн усăллă. Силос çитерни вăхăтра ĕнесем сĕт парассине уйрăмах ӳстереççĕ. Иртнĕ çулта «Молния» колхозра кашни фуражлă ĕнерен вăтам шутпа 1.430 литр сĕт суса илнĕ, кăçал октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1.700-шер литр суса илтĕмĕр, — тесе каласа парать И. Терентьева юлташ.

«Большевик» колхозра та силос хатĕрлес ĕçе хакласçĕ. Пурĕ 160 тонна силос хывса хăварнă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз силос хывмалли плана 150 процент ытла тултарнă.

Анчах та силос хывас ĕç пур колхозсенче те кирлĕ пек пулса пымасть-ха. «Красный партизан» колхозăн план тăрăх 115 тонна силос хывса хăвармалла. Паянхи куна вăл пĕр тонна та хывман. «Пирĕн силос хывмалли курăксем çук», тет колхоз председателĕ Ефимов юлташ. Çав вăхăтрах çĕрулми аврисем, купăста, кăшман çулçисем уйра сахал мар пĕтнĕ.

Кун пек колхозсем татах та пур. «10 лет Октября» колхоз 40 тонна çеç хывнă. Çавăн пекех «1-ое Мая» колхоз та (председателĕ Ильин) силос хывмалли плана 26,7 процент çеç тултарнă.

Чылай колхозсенче силослăх акнă хĕвелçаврăнăшне халĕ те çулса пухман. «Красный металлист» колхозра 5,5 гектар çинчи хĕвелçаврăнăшне халĕ те çулман, «Заря» колхозра 3 гектар ытла хĕвелçаврăнăшне çулса пăрахнă та, икĕ эрне ытла ĕнтĕ çумăрпа йĕпенсе выртать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Республикăри колхозсенче авăн çапас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Авăн çапнă (комбайнпа вырнине шута илсе)	Кĕрхи çĕртме тунă
Улатăр	61,3	44,7
Элĕк	70,1	46,9
Вăрнар	69,3	53,9
Йĕпреç	69,6	36,1
Ишлей	77,2	36,8
Калинино	64,5	60
Канаш	72,4	72,6
Куславкка	56,4	39,8
Комсомольски	68,6	44,4
Красноармейски	71,4	35,9
Хĕрлĕ Чутай	59,3	49,1
Кувакино	77,3	20,2
Сĕнтĕрвăрри	59,5	55,5
Октябрьски	56,1	43,8
Первомайски	70,6	48,2
Пăрачкав	81,0	30,3
Советски	48,9	41,1
Сĕнтĕр	70,1	56,6
Вăрмар	62,9	45,1
Çĕрпӳ	65,7	47,1
Шупашкар	69,9	47,5
Чкаловски	58,6	41,3
Шăмăршă	78,4	51,0
Шăхасан	75,5	61,2
Çĕмĕрле	68,5	50,2
Етĕрне	64,7	54,0
Елчĕк	52,1	48,9
Тăвай	65,4	44,6
Шупашкар хули	72,0	89,6
ЧАССР тăрăх	66,4	46,3
Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	65,2	39,9

Выставка участникĕсем

Чкаловски районри колхозсен йышлă та продуктивлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес ĕçре нумай çулхи пуян опыт пур. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне район государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ĕне-пăрусем енĕпе 101 процент, сурăхсем енĕпе 100,4 процент тата сыснасем енĕпе 105 процент пурнăçланă. Кăçал 15 колхозра сысна фермисем, 20 колхозра хур фермисем çĕнĕрен организациленĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă хăйсен çитĕнĕвĕсене районри колхозсем ялхуçалăх выставкинче кăтартса пама хатĕрленеççĕ.

Районри комисси выставкăн участникĕсем пулма Чăваш Сăкăтри «Красное Знамя», Анат Туçари «Çăлтăр» колхозсен сысна фермисене, «Правда» колхозăн сĕт-çу фермине, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп фермине, «Красный Октябрь», «Кзыл-тан», «Маяк» колхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен уйрăм çынсене палăртнă.

Тутар Сăкăтри «Правда» колхозăн сĕт-çу ферми (колхоз председателĕ Насыбуллин, ферма заведующийĕ Р. Сгатдинов юлташсем) районра чи лайăх ферма шутланать. Унти 24 сăвакан ĕнерен кăçал планран ирттерсе 1.736 литр сĕт суса илнĕ. Паллă доярка Бену Начеева хăй пăхакан 7 ĕнерен 8.167 литр сĕт, урăхла каласан кашни ĕнерен вăтам шутпа планран ирттерсе 166-шар литр сĕт суса илнĕ. «Душа» ятлă ĕнерен вăл 8 уйăх хушшинче 3.015 литр сĕт суса илнĕ. Партипе правительствăн постановленийĕ тăрăх Начеева юлташа ĕçшĕн хушса 250 литр сĕт тӳлеççĕ. Ăна районри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма палăртнă.

Çак колхозри пăрусене пăхакан Ф. Идрисова 9 ĕнерен пĕрер пăру илсе пурне те сывă пăхса çитĕнтернĕ. Сурăх пăхакан Чарланова хăй пăхакан 75 сурăхран 207 килограмм çăм илнĕ. Планран ирттерсе 35 килограмм çăм илнĕшĕн ăна ĕçшĕн хушса 3,5 килограмм çăм тӳлеççĕ. Чишме ялсоветĕнчи «Кзыл-тан» колхозри доярка Гаян Шарафутдинова хăйне çирĕплетсе панă 7 ĕнерен 7 пăру илсе пăхса çитĕнтернĕ, ĕнесенчен 8.414 литр сĕт, урăхла каласан, кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.202-шер литр сĕт суса илнĕ. Идрисова, Чарланова тата Шарафутдинова юлташсем— районри выставкăн участникĕсем.

Молотов ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп ферминчи çăмарта тăвакан 126 чăхран кăçал 9.423 çăмарта, кашни чăхран вăтам шутпа 75-шер çăмарта илнĕ. Чăх пăхакан Анна Задоновăна выставкăна хутшăнтарма палăртнă.

Районри хăшпĕр колхозсем кăçал тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çитĕнӳсем турĕç. Туçари «Çăлтăр» колхоз (председателĕ Баранов, агротехник Д. Маршев, участокри агроном М. Миронова юлташсем) 576 гектар лаптăк çине акса хăварнă пучахлă тырăсенчен кăçал вăтамран 14,03-шер центнер тырă пухса кĕртнĕ. Уйрăм культурăсем енĕпе тырпул тухăçлăхĕ татах та пысăкрах. Ыраш, сăмахран, 371 гектар çинчен 16,8-шар центнер, кĕрхи тулă 16,26-шар центнер, пăри—12 центнер ытларах тухнă. Ку колхоз техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсен тухăçлăхне те ӳстернĕ. Кантăрвăрри планпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах туса илнĕ. П. Рыбаков юлташăн бригади 3 гектар çинчен 6,85-шер центнер кантăрвăрри çапса кĕртнĕ.

Çак колхозăн пахча-çимĕç бригади (бригадирĕ Т. Кузнецов, опытник-овощевод А. Заплаткин юлташсем) кашни гектартан вăтамран купăста 500-шер центнер, хăяр 375-шер центнер, помидор 165-шер центнер, столовăй кăшманĕ 261-шер центнер, сухан 177-шер центнер туса илнĕ.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илнĕ «Маяк» колхозăн пахча-çимĕç бригади те (бригадирĕ Н. Насметдинов юлташ) выставкăна хутшăнать. Вăл кашни гектартан 206-шар центнер купăста туса илнĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз кăçал кок-сагыза лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Пĕр гектар çинчен колхоз государствăна кок-сагызăн чĕрĕ тымарĕсене 8 центнер панă, 28 килограмм вăрлăх пухса илнĕ.

П. НИКОЛАЕВ.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Натуроплата тыррине вăхăтра парса татмалла

Тăвай МТС-ĕ ĕçлекен Нăрваш Кушкăри «Искра Ильича», Çĕнĕ Тăрмăшри «Мартăн 8-мĕшĕ», Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозсем натуроплата тыррине 100 процентпех парса татрĕç. Çавăн пекех Çăлпуçĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия», Йăнтăрчри «Пламя» колхозсем те хăйсен планне 75 процент тултарчĕç. Çав вăхăтрах çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăха ку таринччен те кирлĕ пек туйса илмен колхозсем те пур-ха. Вĕсем ку таринччченех государствăна тырă памалли графика пурнăçлассишĕн тăрăшмаççĕ. Ямбулатоври «Звезда» колхоз 730,72 центнер парас вырăнне пурĕ те 122,69 центнер çеç панă. Çавăн пекех Чутайри «Сталь», Кармалти «Комсомолец», Лачкассинчи «Звезда», Тушкилти «Красная Армия» колхозсем те юлса пыраççĕ. Юлса пыракан колхозсен халех малта пыракансемпе танлашмалла. Октябрь уявĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва анлăн сарса, государствăна тырпул, натуроплата тата ытти продуктсем памалли обязательствăсене чыслăн пурнăçламалла.

В. ЧЕРНОВ,
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕç пăхса ӳстернĕ

Красноармейски ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн пахча-çимĕç бригади кăçал нихăçанхи пек мар пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илчĕ. Бригадăна пурĕ пĕр гектар çурă çĕр уйăрса панă. Çав çĕр çинче агротехника мероприятийĕсене пурне те лайăх пурнăçласа пырса, бригада кăçал 953 центнер купăста, 323 центнер кишĕр, 150 центнер сухан, 153 килограмм хăяр вăрри туса илнĕ. Кунсăр пуçне, бригада килес çул вăрлăх ӳстерме подвалсемпе сакайсене 16.500 купăста туни, 50.000 штука кишĕр пуçтарса хучĕ.

Пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ Е. Макарова хăйĕн бригадипе районри ялхуçалăх выставкине тухма хатĕрленет. Паянхи куна вĕсем пахчари пур ĕçсене те пуçтарса кĕнĕ, пахча вырăнне çимĕçсен юлашкийĕсенчен тасатаççĕ, сухаласа хăвараççĕ. Районри ялхуçалăх выставкин комиссийĕ Е. Макарова бригадине выставкăра пулма çирĕплетрĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Ютçĕршывсенче

Югослави партизанĕсен хăюллă ĕçĕсем

ЖЕНЕВА, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен çапла пĕлтереççĕ. Югослави партизанĕсемпе нимĕç тата итальянец оккупанчĕсем хушшинче çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Мрконичград, Ключ районĕнче партизансем контрнаступлени пуçласа янă. Ключшăн пыракан çапăçусенче нимĕçсемпе усташа чаçĕсем чылай пысăк поражени тӳснĕ. Ытти районсенче партизансем противникăн атакисене ăнăçлăн сирсе тăраççĕ.

Босниин сурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче партизансемпе оккупациллĕ влаçсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. «Нейе Орднунг» ятлă гитлерла хаçат та партизансем калама çук хастарлăн çапăçнине йышăнать. Вăл çапла çырать: «Югослави партизанĕсем вĕсене пулемет çулса тăрсан та каяллла чакмаççĕ, партизансем окопсемпе позицисене штурмлаççĕ. Противник хăйне хăй шеллемесĕр тапăнать, вăл нимĕнле стратегие те йышăнмасть, анчах нимĕнле поражение те пĕлмест».

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПОЛЬШĂНА ИРĔКСĔР НИМĔÇЛЕТЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла пичет Польшăна нимĕçлетессине васкатма чĕнет, Польша çĕрĕ çинче «славян шăршине пĕтерсе хумалла», тет. «Остдейчер беобахтер» хаçат Германин обер-бургомистрĕн статьине пичетленĕ. Вăл çапла çырать: «Нимĕçсем Польшăра киленсе пурăнмалла, вĕсем кирек хăçан та хăйсем ытти халăхсенчен аслăраххине туйса тăмалла, урăхла каласан, çав çĕршывра вĕсем хăйсене хăйсем хуçа пек туйса тăмалла», тет.

Данцигри гитлерла наместник «Кракауэр цейтунг» хаçатра статья пичетленĕ, унта вăл Данцигран «ютçĕршыв çыннисене» пурне те хăваласа кăларма хушать; гитлерла çынçиен Данцигри поляк халăхне çавăн пек ятпа калать ĕнтĕ.

Нимĕçлетме чăннипе пĕрлех тата çавăн пек ĕçсем те тăваççĕ. Çапла, акă, «Варшауэр цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Варшавăра урамсен, историллĕ çуртсен тата ыттисен полякла ячĕсене нимĕçле ятсемпе улăштараççĕ. Поляксене служба тĕлĕшĕнчен вăйлăн хĕстерсе тата пере-пере пăрахса, пĕртăтăш пĕтерсе пыраççĕ. «Литцманштедтер цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: Познаньре хăйне уйрăм судсем тунă, çав судсем вĕсем тĕрлĕ сăлтавпа айăплакан «поляксен преступленийĕсене» пăхса тухаççĕ. Гитлеровецсем поляк халăхне высăпа та вĕлерсе пыраççĕ. «Остдейчер беобахтер» хаçат кăçал поляк хресченĕсенчен юлашки тырра тата çĕрулмине туртса илнипе тата çав продуктсене илмелли нормăна икĕ хут ӳстернипе намăса пĕлмесĕр хĕпĕртесе çырать.

ИТАЛИ ОККУПАНЧĔСЕМ АФИНĂРА ДЕМОНСТРАНТСЕНЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Стамбулран çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, итальянецсен карабинерĕсем, забастовка тунă транспортри рабочисене, Афинăн аслă урамĕпе демонстраци туса пынă рабочисене салатса яма чĕнсе илнĕскерсем, демонстрантсене пулеметпа персе нумай çынна вĕлернĕ тата амантнă.

ЧИЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОТСТАВКĂНА ТУХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Сант-Ягоран пĕлтернĕ тăрăх, Чили правительстви отставкăна тухнă, вăл президента Риоса ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма, Баррос-Харп вырăнне урăх çынна уйăрса лартма май парас тесе отставкăна тухнă. Баррос-Харп вăл тĕнĕл держависемпе çыхăнса тăма тăрăшнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес октябрĕн 10-мĕшĕнче Латинла Америкăри икĕ çĕршыв—вĕсем тĕнĕл держависен агенчĕсене «союзниксене çурăмран çапма» пулăшаççĕ, тесе айăпласа сăмах тухса каланă. Çавăн хыççăн вара Чилире йышлă çынлă митингсем нумай пулнă; çав митингсенче Баррос-Харпа отставкăна кăларма тата тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахма ыйтнă.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче социалистла партин центральнăй комитечĕ хăйĕн Чили правительствинче тăракан членĕсене тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахтарма хушнă. Кабинетра 5 радикал, 3 социалист, 2 независимăй либерал тата 2 демократ пулнă.

США конгресĕ подоходнăй налога ӳстермелли законопроекта ырланă

ВАШИНГТОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă валли укçа-тенкĕ ытларах памашкăн конгресс налогсене нумай ӳстермелли çинчен калакан законопроекта йышăннă.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ налогсем государство тупăшне 8,5 миллиард доллар ытла ӳстереççĕ. Килес çул тӳрĕ налогсем паракан тупăшсем 25 миллиард доллар ытла пулмалла. Уйрăм çынсен дохочĕсенчен, уйрăмах та вак тата вăтам доходсенчен илекен налогсем тата корпорацисен дохочĕсенчен илекен налогсем питĕ нумай ӳсеççĕ. Эрех, пируссем çине, телефон тăрăх калаçни çине, телеграф тăрăх пĕлтернисем çине, чугунçул билечĕсем çине тата ытти çине хунă налогсене ӳстернĕ.

Финанс министерстви çапла каланă: çар промышленноçне укçа-тенкĕ парса тăма налогсене татах та ытларах ӳстермелле, тенĕ.

КĔСКЕН

* Белградра нумай çынна арестленĕ; вĕсене, официальнăй пичет каланă тăрăх, «пăлхав тума хатĕрленнĕ май» арестленĕ.

* Эрцгерцог Альбрехт Габсбургский (ăна гитлеровецсем Венгрин вице-регенчĕ туса хурасшăн) Венгри оккупанчĕсен Югославири Воеводина провинцире тăвакан террорла ĕçĕсене ертсе пырать.

* Шарлеруара (Бельгия) гестапо штабĕнче бомба çурăлса кайнă. Темиçе нимĕç вилнĕ.

* Англин тинĕс-çар флотне икĕ çĕнĕ пысăк линкор хутшăннă, вĕсем 1941 çулта путарнă «Принц Уэльский» ятлă линкор йышшисемех. Çĕнĕ линкорсем çапла ятлă: пĕри—«Энсон», тепри—«Хоу».

Англин тинĕс-çар флотĕнче çавăн йышши линкор тата иккĕ пур: «Король Георг» тата «Герцог Иоркский».

* Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен верфĕсенче 1943 çулхи январьте кашни кун 4 суту-илӳ пароходĕ тума тытăнаççĕ. Халĕ 3 пароход тăваççĕ.

Полководец П. И. Багратион

Грузин халăхĕн ывăлĕ князь Петр Иванович Багратионăн ячĕ пирĕн çĕршывăн геройлăхпа пуян летописĕсенче вилĕмсĕр хисеплĕ ят пулса тăрать. Вăл çавтери паттăр пулнипе çавăн пек чапа тухнă. Унăн паттăрлăхĕнчен тусĕсемпе соратникĕсем кăна мар, Наполеон пек тăшмансем те тĕлĕннĕ, ăна мухтанă.

П. И. Багратион Терек облаçĕнчи Кизляр хулинче çуралнă. Çамрăк ача чухнех вырăс çарĕн ретне, Кавказра çапăçакан мушкетерсен полкне кĕнĕ. 1783 çултанпа, ун чухне вăл 18 çулта кăна пулнă, чеченецсене хирĕç вăрçнă çĕртен пуçласа, вăл çар ĕçĕнче хăйĕн паттăрлăхне палăртнă. Пĕррехинче, ăна, йывăр аманнăскере, çапăçу хирĕнче тыткăна илнĕ те чеченецсен аулне илсе пынă, анчах ăна часах каялла янă, мĕншĕн тесен чеченецсем Багратионăн ашшĕне вĕсемшĕн темĕнле ырă ĕç тунăшăн кăмăлтан килĕштернĕ. 1794 çулта Польшăри кампани вăхăтĕнче Багратионăн вăрçăра Суворовпа çывăх пулма тивнĕ. Çак кампание Суворов Прага тата Варшава хулисене тытса илнипе питĕ чаплăн вĕçленĕ.

Çак вăрçăра Багратион утлă çарпа хăюллăн тата хăвăрт тапăнса пырас ĕçĕн мастерĕ пулнине кăтартнă. Пысăк мар вăйсемпех вăл, тăшман мĕн пек вăйли çинчен ыйтса тăмасăр, тăшман ăçта тăни çинчен ыйтса, поляксен отрячĕсене Брест, Седлец, Дерячин, Броды çывăхĕнче тата ытти çапăçусенче те аркатса тăкнă. Çак вăрçăри юлашки çапăçура, Прага çывăхĕнче, Багратион хăйĕн кавалери полкĕпе тăшманăн кавалерине каялла чактарнă, вара тăшманăн тарма тытăннă кавалерине Висла юханшывĕ хĕррине çитиччен хăваланă.

Суворов ăна час асăрханă, Багратиона чи паха командирсенчен пĕри тесе шутланă, 1800 çулта вара 35 çулхи çамрăк генерала Италири вăрçăра хăйĕн çарĕн чи ответлă ĕçне шанса панă, авангард начальникĕ пулма уйăрса лартнă. Генилле полководец шаннине Багратион тӳрре кăларнă. Вăл Италири вăрçа Брешия, Бергамо тата Лекко хулисене туртса илнипе тытăннă. Лекко çывăхĕнче апрелĕн 27-мĕшĕнче Багратиона пуля тивсе урине амантнă, анчах ултă кун иртсен вăл каллех стройра пулнă. Вăл Маренго çывăхĕнчи çапăçура çĕнтерет, унтан вырăс çарĕсен Суворов командир пулса ертсе пынипе çапăçакан тĕп чăмăрĕпе пĕрлешет, Александрийский цитаделе, Серавалка хулине туртса илнĕ çĕрте тата Нови çывăхĕнчи вăйлă çапăçура паттăррăн çапăçать. Нови патĕнче Суворов ăна французсен çарĕн центрне атакăлама хушнă пулнă.

Вăрçă пынă май Суворов çарне Швейцарие куçармалла пулнă. Суворов вара çӳреме кансĕр сăртсенчи сукмаксем çинче çирĕпленсе ларнă французсен çарĕсене çапса аркатас çавтери йывăр задание Багратиона парать. Сăртсем хушшинче питĕ пысăк ăсталăхпа операцисем туса пырса, çавтери йывăр условисенче—юр, çăмăр айĕнче, сăртсем çинчи пăрлă çил-тăвăл витĕр, тĕтреллĕ, нимĕн курăнман çанталăкра чĕркуççи таран юр ăшĕнче ашса пырса, Багратион командующи лартнă задачăна пурнăçа кĕртме пултарнă. Унăн хыççăн тата унпа пĕр вăхăтра тепĕр çулпа пыракан вырăс çарне сăртсем урлă каçма май панă. Ту качакисемпе охотниксем кăна çӳреме пултараççĕ тесе шутланă сукмаксем тăрăх çар сăртсам урлă каçнă. Гларисса патĕнче пулнă хаяр çапăçусенче Багратион çак йывăр кампанире иккĕмĕш хут аманнă. Вырăс çарĕн тĕп чăмăрĕ Альпа урлă каççан, Суворов Багратиона малтанхинчен çăмăл мар тата хăрушă ĕç—вырăс çарĕн аръергардне французсен пысăк вăйĕсем тапăннинчен хӳтĕлесе пыма хушнă. Аслă полководец хăйĕн çывăх помощникĕн нимĕнпе танлаштарма çук хăюлăхĕпе хастарлăхне тата тактика тĕлĕшĕнчи пысăк пултарулăхне тивĕçлĕ хак панă, официальнăй йĕркепе çырнă хутсенче вăл Багратиона «аслă степене тивĕçлĕ чи лайăх генерал» тесе хак панă.

1805 çулти кампанире пĕрремĕш Александр йăнăшсем тунăран, сыхланулла пулманран вырăссен войскисене Россия чиккисенчен 1000 километр таран аякка, Германи çĕршывĕн ăшне Наполеонăн пысăк çарне хирĕç кĕртсе янă. Çав çара пĕтесрен вырăссен генилле стратегĕн Кутузовăн çăлса хăвармалла пулнă. Çавăн чухне Кутузов хăйĕн çарĕн аръергардне хӳтĕлесе пырас йывăр та хăрушă ĕçе каллех Багратиона хушнă. Вăл вара вырăс çарне йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çĕртен йĕркеллĕн чакма май туса панă кăна мар, тапăнса пыракан Мюрата хăйне Амштетен çывăхĕнче хаяррăн тавăрнă. Багратионăн çак кампанири питех те паттăрла ĕçĕ вăл—вырăссем мухтава тухнă çапăçу, Шенграбен ятлă местечка патĕнчи çапăçу пулнă. Çак çапăçу вырăссен мухтавлăхĕн кĕнеки çине уйрăмах палăрмалла çыранса юлнă. Кутузов çав çапăçăва Багратиона 6.000 çынлă отрядпа янă. Багратион унăн вăйсăр çарне хĕсекен тата пысăк çулпа куçса пыракан вырăссен тĕп çарне сылтăм флангран тапăнма хăтланакан французсен 30.000 çынлă çарне пĕр кун хушши чарса тăнă. Аустерлиц патĕнчи ăнăççăр çапăçу (император Александр айăпĕпех ăнăççăр пулнă çапăçу) хыççăн та Багратион умне çавăн пекех йывăр задача лартнă, ăна аръергард пуçлăхĕ тунă. Вăл вара çав ăнăççăр çапăçу хирĕнчен вырăс çарне чылай йĕркеллĕн илсе тухса кайма май панă.

Темиçе хутчен паттăрлăх кăтартнă хыççăн та, темиçе хутчен аманса та Багратион канăçлăхра ырă курса пурăнман. Вăл 1807 çулти кампанире те пулнă. Каллех вăл Прейсиш Эйлау патĕнчи тата Фридланд патĕнчи çапăçусем хыççăн вырăс çарĕн тылне хӳтĕлесе пырать. Унтан 1808—1809 çулсенче Швецие вăрçнă чухне Багратион, дивизи командирĕ пулса, Ботнически залив тăрăхĕнче Швеци войскисене темиçе хутчен те çапа-çапа аркатнă. Темиçе хутчен поражени тӳснĕ хыççăн, Швеция мир тума килĕшнĕ, Фридрихгамра мир тунă чухне Швеция Россия аллине Финляндие панă (1809 çул).

Швецие хирĕç вăрçнă çĕртенех Багратиона Турци фронтне, Дунай юханшывĕ патне, главнокомандующи туса янă. 1809 çулти кампани малтан пирĕн войскăсемшĕн ăнăçуллăн пулса пынă. Багратион вара Мачина, Кюстенджие тата Браилова йышăнса илнĕ. Унтан вара туроксем патне çĕнĕ вăйсем чылай пырса çитнĕ. Силистрия крепоçне хупăрласа тăма пăрахса, Багратионăн хăйĕн войскисене Дунай юханшывĕн сулахай çыранне куçармалла пулнă. Çакăн пек пĕр çĕрте çапăçу ăнăçлă пулманшăнах император Александр вара Багратиона вырăнтан кăларнă, командующи пулма урăх çынна (Н. М. Каменские) уйăрнă. Багратион хăйне пĕчĕкрех ĕçе куçарнăшăн кăмăлсăр пулман. Обстоятельствăсене пула, унăн часах çар ĕçĕнчи хăйĕн пултарулăхне пĕтĕмпех чаплăн палăртма май килнĕ.

Çĕнĕ, унччинчен хăрушăрах вăрçă пуçланасси çывăхарнă. Наполеона хирĕç кĕрешмелли вăрçă—1812 çулти Отечественнăй вăрçă пуçланнă. Çав вăрçăра Днепрăн вăтаçĕрĕнчи линие тытса тăракан кăнтăрти çарăн командующийĕ пулма Багратиона уйăрса лартнă. Наполеонăн тĕп çарĕсем Вильно, Витебск тата Смоленск патнелле пыни палăрсан, Багратионăн Наполеон çарĕсен кăнтăрти ушкăнĕсем атакăланине сирсе пырса, пирĕн войскăсен çурçĕрти ушкăнĕпе пĕрлешме Смоленск патнелле чакмалла пулнă. Багратион çакна пысăк ăсталăхпа пурнăçа кĕртнĕ. Часах Бородино патĕнчи вăйлă çапăçу пулса иртнĕ.

Унчухне те Багратионăн вăрçă фрончĕн чи хăрушă тата чи йывăр участокĕнче Семеново патĕнчи укрепленисенче (флешьсенче) çапăçма тивнĕ. Семеново патĕнчи флешьсене противник çине-çинех тапăннине темиçе хутчен те арăсланла çапăçса сирсе ярса, Багратион хăй контратака тума тытăннă. Анчах çапăçу питĕ вăйлăн пынă вăхăтра вăл йывăр аманнă, ăна çапăçу хирĕнчен йăтса тухнă. Аманнă полководеца Владимир кĕпĕрнинчи пĕр яла илсе пынă, унта вăл Бородино патĕнчи çапăçу хыççăн икĕ эрнерен вилнĕ.

Багратион—вăл хăйĕн примерĕпе халăхăн шухăш-кăмăлне, тăван çĕршыва парăнса тăрассине çирĕплетекен тата уншăн вилме те хатĕр пулса çапăçма вĕрентекен чаплă çынсенчен пĕри. Вырăс хĕçпăшалĕн чаплă ĕçĕсен летописĕ çине грузин халăхĕн ывăлĕ паха та чаплă страницăсем çырса хăварнă.

Багратион аслă патриот пулнă, хăйĕн юнĕпе вырăс тата грузин халăхĕсен аслă тăванлăхне çирĕплетнĕ, тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр парăнса хăйĕн тивĕçлĕ ĕçне чыслăн пурнăçласа пынă.

Проф. А. ЯКОВЛЕВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чувашское управление лесохраны и лесонасаждений и местком извещают о преждевременной смерти после тяжелой болезни старейшего лесничего
ПАВЕЛЬЕВА Александра Федоровича,
последовавшей 22 октября, и выражают семье покойного глубокое соболезнование.

Срочно требуются на постоянную работу гл. бухгалтер, электротехник, инспектор по кадрам, инженер-технолог, экономист, электромонтеры, мотористы, лаборанты, дорожный мастер, врач, слесари по сантехнике, шоферы автомашин, техник связи, приемосдатчики.
Обращаться по адресу дер. Аникеево, Контора объекта п/я 14.

Чебоксарскому Горпромкомбинату требуются для трикотажного производства работницы: чулочницы, трикотажницы, мотальщицы, ученицы.
Рабочие обеспечиваются общежитием и столовой.

Чебоксарской Межрайконторе Главзаготскот центра требуются на постоянную работу: заведующий базой, приемщик скота, старшие гуртоправы—2 человека, конюх, охранник.
С предложением обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ярмсрочная площадь, дом № 5.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11233 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.